ХЫПАР

# Тантăш

Чăваш ачисен хаçачĕ

Хакĕ ирĕклĕ
Индексĕ: 54802

1931 çулхи кăрлачăн (январĕн)
12-мĕшĕнче тухма тытăннă

6+

9 (4526) №, 2017, пуш (март), 9





«ЧИ ЛАЙĂХ КОМАНДИР»
ЯТА ТИВĔÇНĔ ЛИЗА

*Темиçе çул ĕнтĕ вăл Солдатова хушаматпа мухтанать.*

2 стр.



КУ – МАНĂН
ТĂВАН ÇĔРШЫВ

*Çапла мăнаçлăн калаçççĕ Ишек вăтам шкулĕн вĕренекенĕсем.*

3 стр.



КУНТА – КИЛ ĂШШИ ТЕ,
АТТЕ-АННЕ ЮРАТĂВĔ ТЕ

*Ача кашни çын умĕнче чунне уçма пултараймасть. Ăна амантасран асăрханмалла.*

4 стр.

## Юрă чиртен сывалма пулăшрĕ



Эпир хамăр пирки çĕннине кунран-кун ытларах пĕлетпĕр. Çулсеренех умра çĕнĕлĕх уçăлать. Ăс-тăн тата чун тĕлĕшĕнчен пурнăç тăршшĕпех çитĕнетпĕр. Малалла талпăнман, ĕмĕтленмен, çĕнĕлĕхе йышăнман çын пĕр вырăнта хытса ларнă палăк евĕрех. Аталану – акă мĕн чи кирли. Шупашкарти 2-мĕш шкулта виççĕмĕш класра вĕренекен Мария Нефедова çакна мĕн пĕчĕкренех ăнланса илнĕ кăна мар, ăна пурнăçлать те.

6 стр.

**Тĕрлĕрен: вула та пĕл**

# «Чи лайăх командир» ята тивĕçнĕ Лиза

***Лиза Солдатова хăйĕн хушамачĕпе чăнласах мăнаçланать. Унăн шухăшĕпе çак сумлă хушамат ăна кирек ăçта та пулăшса, хавхалантарса пырать, çитĕнӳсем тума хăпартлантарать.***




– Мăн-мăн асатте хăй вăхăтĕнче 22 çул салтакра служба пулнăскер тăван яла таврăннă. Паттăр салтака тӳрех Солдатов хушамат çыпăçтарса хураççĕ, – ăнлантарать вăл несĕлĕсен шăпи пирки.

Çапла, Лизăра та чăн-чăн салтак юнĕ чупать. Вăл 7 «а» кадет класĕнче ăнăçлă вĕренсе пырать. Тăрăшуллă, кирек кампа та пĕр чĕлхе тупма пĕлекене ахальтен мар ушкăн командирне суйланă ĕнтĕ. Сасси мăнаçлă та янăравлă, утти сулмаклă та хăватлă.

– Пĕрремĕш класранпах «5» паллăсемпе вĕренсе пыратăп. Чăваш чĕлхи, вырăс чĕлхи тата физкультура предмечĕсем чунтан килĕшеççĕ. Пурнăçăма вара çарпах çыхăнтарас тĕллевлĕ эпĕ. Çак шухăш пуçа пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухне пырса кĕчĕ. Ун чухне пирĕн шкула пограничниксем тĕлпулăва килчĕç. Хăйсен пурнăçĕпе паллаштарнă хыççăн пире беретсемпе погонсем парнелерĕç. Ах, чĕре кăлткăлт тапрĕ ун чухне! «Ан манăр, сирĕн пурин те спортпа туслă пулмалла. Тăван çĕршыва юрăхлă çын пулас тесен çирĕп сывлăхлă, йăрăс пӳллĕ пулмалла», – терĕç пире пил парса. Пĕлтĕр вара Çĕмĕрлере иртнĕ республикăри кадетсен ăмăртăвĕнче 2-мĕш вырăна тухрăмăр. Тата та кăмăлли – эпĕ «Чи лайăх командир» ята илни. Çакă мана пушшех вăй-хăват хушрĕ. Малашне те ăнăçу пирĕнпе пĕрле пуласса шанса та, ĕненсе тăратпăр, – çирĕплетет хастар хĕрача.

Лиза ӳкерме те ăста. Акă паян та вăл çуркуннене сăнларĕ. Кăпăш юр кантăкпа витĕннĕ тейĕн. Хытнă, çултан пăрăнса кĕрсен, йĕлтĕрсĕр те путмастăн. Юр çийĕ хĕвел пайăркипе ахах пĕрчи евĕр йăлтăртатать. Çĕрлехи çутă çăлтăрсем тӳперен пĕтĕмпех çĕр çине тăкăннă, тейĕн.

– Чим, тĕлĕнтермĕш янкăр кăвак тӳпе ӳкерем-ха! Чи-чи хитре чаршав. Кун пек çанталăка юрататăп эпĕ. Çакнашкал илем пурăнма тата та хавхалантарать, – тет Лиза Солдатова.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Патăрьел районĕ,
Патăрьелти 1-мĕш шкул.

# Сăваплă тивĕç

***Яшсем Тăван çĕршыва сыхлама яланах хатĕр. Вĕсем аслă ăруран вĕренсе пыраççĕ. Анчахрах пирĕн общежитире «Мы всей памяти верны» литературăпа музыка каçĕ иртрĕ.***

Мероприятие ертсе пыракан Григорий Артемьевпа Станислав Николаев çĕршыв хуралçисен уявĕ пирки кăсăклăн каласа кăтартрĕç.

Вăрçă, çар тематикиллĕ сăвăсем чылай янăрарĕç залра. Э. Асадов, К.Симонов, М. Джалиль, С. Васильева, С. Щипачева поэтсен хайлавĕсем кашнинех хумхатрĕç-тĕр. «Идет солдат по городу», «Журавли», «Алеша» тата ытти паллă юрă та пухăннисене тăвăллăн алă çупма хистерĕ. Гитара ăста калакан Дмитрий Колбасов пĕчĕк концерта илемлĕ кĕвĕпе пуянлатрĕ.

Студентсем пултарулăхра кăна мар, вăйă-конкурсра та хастар пулнине çирĕплетрĕç. «Пур çавăн пек професси – Тăван çĕршыва хӳтĕлесси» викторинăпа «Служу Отечеству»! конкурсра кăмăлтан тупăшрĕç вĕсем. Пулас салтаксем тĕрлĕ хусканура вăй висрĕç. Чи маттуррисем Владислав Александров, Максим Павлов, Иван Шачков, Алексей Александров /студентсен 1-мĕш общежитийĕ/ тата Евгений Шашков, Николай Шенчуков, Дмитрий Иванов, Алексей Коновалов /2-мĕш общежити/ пулчĕç.

Тăван халăхăн паттăрлăхне асра тытасси – пирĕн сăваплă тивĕç. Çакна эпир тепĕр хут ăнланса илтĕмĕр. Иртнипе пурин те кăсăклăнмалла, тăван халăхăн йăли-йĕркине хисеплемелле.

***Григорий АРТЕМЬЕВ,***
***Станислав НИКОЛАЕВ,***
***«Çамрăк журналист» кружок членĕсем.***

Шупашкарти транспортпа
строительство технологийĕсен техникумĕ.




**Çырăнтару – 2017**

2017 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн
"Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене
***пушăн 31-мĕшĕччен***
йӳнĕ хаксемпе çырăнтараççĕ:
**«ХЫПАР»** (индексĕ П2273) – 624 тенкĕ,
**«ХЫПАР-эрнекун»** (индексĕ П2267) – 286 тенкĕ те 92 пус,
**«ХРЕСЧЕН САССИ»** (индексĕ П2273) – 255 тенкĕ те 54 пус,
**«ТАНТĂШ»** (индексĕ П2275) – 231 тенкĕ те 54 пус,
**«ТЕТТЕ»** (индексĕ П2303) – 135 тенкĕ те 42 пус,
**«САМАНТ»** (индексĕ П2302) – 171 тенкĕ те 84 пус
**Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хаксем ӳсеççĕ.**
**Халех çырăнса укçăра перекетлĕр!**

## ĂШĂ САЛАМСЕМ

*СМС саламсене пĕлтермелли номер:*
89051975911

**Татьяна Васильевна МАКАРОВĂНА** çурхи уяв ячĕпе саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, чечек пек илем, çăка пек çемçе кăмăл, хĕвел пек ăшă кулă сунатпăр. Эсир пĕтĕм ыррине паратăр, лайăххине вĕрентетĕр, малалла ăнтăлма хăнăхтаратăр. Чунтан саламласа вăрăм ĕмĕрлĕ пулма телей пиллетпĕр.

***«Тевет» фольклор ушкăн членĕсем.***
Комсомольски районĕ,
Аслă Чурачăк.

Эпир хамăрăн класс ертӳçине **Людмила Геннадьевна ТИМОФЕЕВĂНА** Пĕтĕм тĕнчери Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Вăл пире сăпайлă, ырă кăмăллă пулма вĕрентет, кашни ача тарăн пĕлӳ илтĕр тесе тăрăшать.

Людмила Геннадьевна, Сире тӳсĕмлĕх, ĕçре ăнăçу, пурнăçра телей сунатпăр. Чи кирли – сывлăх. Вăл нихăçан та ан хавшатăр. Тулли телейпе пурăнăр. Эпир Сире юрататпăр.

***4-мĕш класс ачисем.***
Вăрмар районĕ,
Арапуç шкулĕ.

Тантăш — чăваш ачисен хаçачĕ

● **УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● **ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:**
**54802 -** (çур çула) – Чăваш Республикинче

● **Редакципе издатель адресĕ:**
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● **"ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:**
Тел.: 64-24-01

● **ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР**
**Т.Г.ВАШУРКИНА**

● **ТЕЛЕФОНСЕМ**

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 28-83-70 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● **РЕДАКТОР**
**В.ФЕДОРОВ**

● **НОМЕР ВУЛАВÇИ**
**Н.ЦАРЫГИНА**

● **КАЛĂПЛАВÇĂ**
**Н.ПЕТРОВА**

● **ЭЛЕКТРОН АДРЕС:**
e-mail: tantas@list.ru

● **ТИРАЖ**
**1243 экз.**

● **ЗАКАЗ**
**№ 733**
Пичете пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче алă пуснă.

● **ПИРĔН САЙТ:**
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓡ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.




# «Ку – манăн Тăван çĕршыв!»

**Кашни класс хăйĕн пурнăçне интереслĕ ирттерессишĕн тăрăшать. Вăл шутра эпир те.**



Нумаях пулмасть «Ку – манăн Тăван çĕршыв!» ятпа мероприяти йĕркелерĕмĕр. Екатерина Ивановна Григорьева класс ертÿçи ăна тĕлĕнмелле лайăх ертсе пычĕ.

Эпир «самолета» ларса хамăрăн çĕршыв çийĕн вĕçрĕмĕр, унăн вĕçĕ-хĕррисĕр пуянлăхĕпе паллашрăмăр, илемне курса савăнтăмăр. Мускавра та «пулса куртăмăр». Кашни республикăн хăйĕн символики пур. Эпир ăна лайăх пĕлетпĕр. Хальхинче вара вĕсемпе паллашма пултартăмăр. Тăван çĕршыв ялавĕ виçĕ тĕслĕ. Çав тĕссен пĕлтерĕшне ăнлантартăмăр. Герб çинчи паллăсем те питĕ интереслĕ. Çĕршыв гимнне ура çине тăрса мăнаçлăн юрларăмăр. Кăшт вăхăт иртсен автобуса «ларса» тăван Ишеке таврăнтăмăр. Хамăрăн юратнă шкул, тăван тăрăхри паллă вырăнсем пирки чылай калаçрăмăр.

Питех те интереслĕ иртрĕ çулçÿрев.

*Софья ГРИГОРЬЕВА,*
*4-мĕш класс вĕренекенĕ.*
Шупашкар районĕ, Ишек шкулĕ.
**САНÜКЕРЧĔКРЕ:** «Çула тухар-и, ачасем?»

# Çамрăк олимпçăсем ăмăртрĕç




**Ачасене мĕн пĕчĕкрен спорта юратма хăнăхтарас тĕллевпе Шупашкарти ача садĕсенче нумай ĕç тăваççĕ.**

Анчахрах «Хĕллехи кĕçĕн Олимп вăййисем» иртрĕç. Спорт уявне 61-мĕш ача садĕнче йĕркелерĕç. Хулари 6-мĕшпе 9-мĕш ача садне çÿрекенсем хаваспах хутшăнчĕç. Ăмăрту ялавне çĕклеме хисеплĕ хăнасене те чĕнтĕмĕр. Олег Анатольевич Исачкин ухăçă тата каратэ енĕпе спорт мастерĕн кандидачĕ, Олимп вăййисене хутшăннă спортсменсем ачасене ÿт-пĕве пĕчĕкренех çирĕплетсе ÿстермеллине каларĕç. «Правур хоккеистсем», «Биатлон» «Çуна спорчĕ», «Керлинг», «Слалом» вăййсем пулчĕç программăра. Çамрăк спортсменсем тĕрлĕ енпе ăмăртса лайăх кăтартупа савăнтарчĕç. Çĕнтерÿçĕсем медальсене, дипломсене, парнесене тивĕçрĕç. Хĕллехи кĕçĕн Олимп вăййисем пурне те хавхалану парнелерĕç.

*Алена НЕМЦЕВА,*
*Галина НИКОЛАЕВА.*
Шупашкар, 61-мĕш ача садĕ.
**САНÜКЕРЧĔКРЕ:** çамрăк олимпçăсем.

# Пултаруллисем!

Республика вĕренÿ институчĕ пултаруллă вĕрентекенсене тупса палăртас тата чăваш чĕлхипе литератури учителĕн профессине тивĕçлĕ шая çĕклес тĕллевпе «Чăваш чĕлхипе литератури. Усă урок-2017» фестиваль ирттерчĕ. Кăçал вăл пиллĕкмĕш хут иртрĕ.

Жюри учительсем урока хатĕрленнĕ чухне тĕрлĕ культура хутшăнăвĕпе тата çĕнĕ технологисемпе усă курнине, ачасем валли хатĕрленĕ презентаци содержанийĕпе пуянлăхне, вăл ытти ĕçрен уйрăлса тăнине тата урок тапхăрне педагогикăпа методика енчен пĕлсе тишкернине пăхса хакларĕ.

Уявăн пĕрремĕш тапхăрне вырăсла тĕп пĕлÿ паракан шкулсенче чăваш чĕлхи вĕрентекен 13 учитель хутшăнчĕ. Нумай енлĕн ăмăртса И.В.Ефимова /Çĕнĕ Шупашкар, 9-мĕш шкул/ çĕнтерÿçĕ пулчĕ. И.В.Матьянова /Шупашкар, хавшак сывлăхлă ачасен 2-мĕш шкулĕ/, А.А.Такинăпа Л.К.Севрикова /Çĕнĕ Шупашкар, 18-мĕш лицей/, А.А.Ядрицова /Йĕпреç 2-мĕш шкулĕ/ тата Л.В.Кудрявцевăпа Е.С.Степанова /Шупашкар, 19-мĕш шкул/ – призерсем.

Уявăн иккĕмĕш тапхăрне хутшăнакансем – чăвашла тĕп пĕлÿ паракан шкулсенчи учительсем. Кунта Т.А.Васильева /Сĕнтĕрвăрри районĕ, Октябрьски шкулĕ/ çĕнтерме пултарчĕ. А.М.Степанов /Муркаш районĕ, Калайкасси шкулĕ/, Г.П.Васильева /Тăвай районĕ, Йăнтăрчă шкулĕ/, А.Г.Петрова /Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм шкулĕ/, И.Н.Федорова /Çĕрпÿ районĕ, Михайловка шкулĕ/, А.Ю.Московцева /Шупашкар районĕ, Мăнал шкулĕ/ призерсен йышне кĕме пултарчĕç.

Тăван чĕлхепе литература вĕрентекенсем çĕнĕ технологи мелĕсемпе уроксенче усă курни, вĕрентÿре тĕрлĕ мелпе тата меслетпе анлăн ĕçлени тăван чĕлхе сумне çĕклет, чĕлхепе литературăна ăса хывма лайăххăс май парать.

Вĕрентекенсене фестивале хутшăнса пултарулăха тĕрлĕ енлĕн кăтартнăшăн ăшшăн саламласа малашне те çĕнĕлĕхсемпе савăнтарма ăнăçу сунас килет.

*Геронтий НИКИФОРОВ,*
*Чăваш Республикин*
*тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ.*




## Расписани хатĕр

**Çак вăхăта кăçал шкултан вĕренсе тухакансем чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Вĕсен хăйсен пĕлĕвне патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕнче /ППЭ/ тĕрĕслеме тивет.**

ППЭ хăш кунсенче пулса иртĕçши? Тинех расписани паллă пулчĕ. Вăл виçĕ тапхăрпа /вăхăтчен малалла, тĕп тапхăр тата хушма тапхăр/ пулĕ. Хăшĕ-пĕри пуш уйăхĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 14-мĕшĕччен вăхăтчен малалла экзамен тытĕ. Тĕп тапхăрта – çу уйăхĕн 29 – утă уйăхĕн 1-мĕшĕсенче географипе, информатикăпа тата ИКТ-па вĕренекенсен хăйсен пĕлĕвне тĕрĕслеме тивĕ.

Вырăс чĕлхипе тата математикăпа экзаменсенче начар паллăсем илнисен е çак икĕ предметран пĕринпе иккĕмĕш хутĕнче те çителĕклĕ балл пухайманнисен авăнăн 5-22-мĕшĕсенче хушма тапхăрта каллех экзамен тытма юрать.

Тăххăрмĕш класс ачисем ака уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 6-мĕшĕччен вăхăтран малалла экзамен тытĕç. Тĕп тапхăр – çу уйăхĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕччен. Хушма тапхăр /авăн уйăхĕнче/ – 5-22-мĕш кунĕсенче.

## Чăваш Енрен – 42 шкул ачи

**Шкул ачисем çирĕм пĕр предметпа çĕршыври олимпиадăн хамăр тăрăхри ăмăртăвне хутшăнчĕç.**

Çак олимпиадăра пурĕ 1815 вĕренекен хăйĕн пĕлĕвне тивĕçлипех кăтартма тăрăшрĕ. Чи нумай вĕренекен /пурĕ 139 ача/ физкультура предмечĕпе олимпиадăра пулчĕ. «Пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсем /ОБЖ/» предмета вара 127 вĕренекен суйланă.

Вырăс чĕлхипе литературинче икçĕр ытла вĕренекен хăйсен пĕлĕвне тĕрĕслерĕ. 109 çамрăк математик, 85 историк, 98 çамрăк биолог чăннипех те çак предметсене кăмăлланине палăртма пултарчĕç.

Олимпиада пĕтĕмлетĕвĕнчен çакă паллă: пирĕн тăрăхран 361 çĕнтерÿçĕ тата призер! Хăшĕсем темиçе предметпа тупăшма май çитернĕ.

Пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче çĕршыври олимпиадăн юлашки тапхăрĕ старт илет. Смоленскра иртекен юлашки тапхăрăн пĕрремĕш кунĕнче çамрăк астрономсем хăйсен пĕлĕвне кăтартĕç.

Иртнĕ çул пирĕн республикăран 42 шкул ачи олимпиада çĕнтерÿçи тата призерĕ пулнă, Чăваш Ен вара Раççейри регионсенче пĕрремĕш теçеткене лекме пултарнă.

## Ĕçне кура чыс

**Пирĕн шкул ачисем вĕренÿре кăна мар, ал ĕçĕ тăвас тĕлĕшпе те, аслă ăрурисене пулăшас енĕпе те маттур пулнине пĕлетпĕр. Вĕсене вара пултаруллă вĕрентекенсем çак ĕçе хăнăхтараççĕ.**



Çак кунсенче Йĕпреç районĕнчи Йĕпреçри 1-мĕш шкулта технологи предметне вĕрентекенсем район фестивальне хутшăнчĕç.

Чи малтанах вĕсем шкулпа паллашрĕç. Ун хыççăн вара учительсем усă урок пачĕç. Кĕлĕмкасси шкулĕнче тăрăшакан Светлана Владимировна Волкова «Çурт интерьерĕ» темăпа питех те интереслĕ урок ирттерчĕ. Чăваш Тимеш шкулĕнчи Елена Васильевна Михайловăн «Таварсемпе паллаштарни. Таварсен символĕсем» темипе ачасем тĕлĕнсе те интересленсе паллашрĕç.

Буинск шкулĕнчи Татьяна Владимировна Васильева «Хĕртсурт» темăпа куракансене те, итлекенсене те тыткăнлама пултарчĕ. Йĕпреçри 1-мĕш шкулта ĕçлекен Надежда Сергеевна Андреева кĕнеке хушшине хумалли паллăна интереслĕ тума пултарнипе тĕлĕнтерчĕ.

Çапла, вĕрентекен хăйĕн пултарулăхĕпе шкул ачине илĕртме пултарать. Пухăннисем малашне пĕрле калаçса, канашласа ĕçleme тăрăшмаллине палăртрĕç.


Шахматла вылянă самант

> **ИСТОРИРЕН**
> ***Готфрид ÿнерçĕ***
> **Швейцарири Берн хулинчи пуян çемьере 1768 çулта хăйне евĕрлĕ арçын ача çуралнă. Готфрид Майнд ăс-тăн енчен хавшакрах пулни палăрнă, часах унăн айванлăхне пурте асăрхакан пулнă. Хăйĕн тыткаларăшĕсемшĕн явап тытманскере ятарлă хÿтĕлевçĕ сыхласа çÿренĕ.**
> **Ача чухнех Готфрид сăрăпа, пурăпа тата грифель хăмапа паллашнă. Часах вăл акварельпе тĕлĕнмелле илемлĕ ÿкерчĕксем тума тытăннă. Çанталăк лайăх чухне хÿтĕлевçĕ ăна пахчари чи хитре вырăна илсе тухнă та арçын ача телейлĕскер, мăкăртата-мăкăртата, куçа мĕн илĕртнине йăлтах ÿкерсе ларнă.**
> **Вăтăр çул тĕлне вăл пĕтĕм Европăра палăрнă. Уйрăмах килти чĕрчунсене тата ачасене чĕрĕ пекех сăнласа панă вăл. Унăн «Кушак тата çурисем» картинине Англи королĕ IV Георг туяннă, хăйĕн керменĕнче çакса хунă.**

# Кунта – кил ăшши те, атте-анне юратăвĕ те

Темшĕн-çке эпир хамăра ушкăнсене пайлама хăнăхнă: пуяннисем-чухăннисем, хитрисем-сăнсăррисем, çÿллисем-лутрисем, ăслисем-айваннисем… Кашни çынна ятарлă этикеткăпа палăртса тухнă тейĕн. Пĕр ушкăнĕ – «лайăх», тепри – «япăх». Паллах, пурин те лайăххисен шутне кĕрес килет, анчах тĕрлĕ сăлтава пула унта лекейменнисен хăйсене мĕнле туймалла-ши? Хĕвел пурне те пĕр пек ăшăтать пулсан мĕншĕн эпир пурне те пĕр пек хисеплеместпĕр?

Пĕр-пĕринчен кулас йăла ачасемшĕн ют мар. Урокра тăтăшах «2» паллă илекенрен пÿрне тĕллесе кулаканнисем те пур. Мĕскĕнĕн вара ăçта кайса кĕмелле ĕнтĕ çак самантра? Килĕнче ашшĕ-амăшĕнчен те лекет… Чăн та, пĕрисем наянлăхне пула вĕренеймеççĕ, теприсем вара… Ăс-тăн тĕлĕшĕнчен пурте пĕрешкел мар çав: çивĕч ăслисем те пур, хавшакраххисем те. Çапах та ку вăл – тăрăхламалли сăлтав мар. Сăмах май, Альберт Эйнштейн паллă ăсчах та шкулта вĕреннĕ чухне вундеркинд пулман. Пачах тепĕр май, унăн ăс-тăнĕ пирки чылайăшĕ иккĕленнĕ, амăшĕ те пăшăрханнă. Ытлах калаçман вăл, кирек епле ĕçе те питĕ мăран пурнăçланă, нимĕнле пултарулăхпа та палăрман. Унран пурте кулнă. Альбертран этем ретлĕ çын пуласса вĕрентекенĕсем те шанман. Куратăр ĕнтĕ, каярах мĕнле паллă та ăслă çын пулса тăнă вăл!

Паянхи кун ахаль шкул программине парăнтарайманнисене пирĕн республикăра Çĕмĕрле районĕнчи Саланчăкри хавшакрах сывлăхлă ачасене вĕрентсе пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан интернат шкул пулăшу пама хатĕр. Шкула 1962 çулта тăлăхсемпе ашшĕ-амăшĕн хÿтлĕхĕсĕр юлнă ачасене валли никĕсленĕ. Кăçалтанпа унăн директорĕ – Анастасия Семеновна Фондеркина. Унччен вара ку тивĕçе 2003 çултанпа Надежда Дмитриевна Сокол пурнăçланă. Халĕ вăл – ĕç сыхлавĕн специалисчĕ.

– Ăс-тăн енчен хавшакрах ачасем ыттисем çăмăллăнах ăнланакан информацие тÿрех ăса хываймаççĕ, – каласа парать Надежда Дмитриевна. – Çавна пула питĕ намăсланаççĕ, «2» паллăсем çаклатаççĕ, хăйсене ыттисенчен катăкрах туяççĕ. Кунта вара ятарлă программăпа вĕренеççĕ. Хăш чухне пирĕн ачасен пĕрре тăваттăмĕш е пĕрре виççĕмĕш пайĕ ударник та пулса тăрать. Пирĕн программăпа вĕсем «4» тата «5» паллăсемпе ĕлкĕрсе пыраççĕ, хăйсене ыттисенчен япăх туймаççĕ. Питĕ лайăх вулаççĕ, илемлĕ юрлаççĕ, ташлаççĕ. Пирĕн «Саланочка» илемлĕ ансамбль те пур. Ăна темиçе çул ĕнтĕ Марина Ивановна Чернигова воспитатель ертсе пырать. Ансамбль республикăра кăна мар, регионсен хушшинчи конкурссенче те сахал мар çĕнтернĕ. Чылайăшĕн хускану çирĕплĕхĕ пăсăлнине шута илсен ачасен хастарлăхĕ ÿсни – кунта ĕçлекенсемшĕн пысăк çитĕнÿ.

1989 çулта шкул çуртне тĕпрен çĕнетнĕ. Санитари тĕлĕшĕнчен нимĕнле çитменлĕх те çук. Вĕренÿ блокĕ, çывăрмалли блок, акт залĕ, библиотека, столовăй, спортзал – вĕсене пурне те ăшă фойе çыхăнтарать. Ачасем пĕр корпусран теприне ăшă тумтир тăхăнмасăрах куçса çÿреççĕ. 2005 çултанпа шкула газпа ăшăтаççĕ. Вĕри шыв та пур, мунча-прачечнăй та ĕçлет. Шкул уçăлсан унта 210 ача вĕренме пынă. Вĕсенчен çурри ытла – ашшĕ-амăшĕн хÿтлĕхĕсĕр юлнăскерсем.

– 2003 çулта эпĕ директор ĕçне пуçăнсан пирĕн интернат шкулти 153 ачаран 74-шĕ – тăлăхсемччĕ, – аса илет Надежда Дмитриевна. – Паянхи кун çавăн пек шăпаллă пĕр ача та çук. Нумайăшне лайăх çемьесем усрава илнĕ. Вĕсем пурте çемье ăшшине туйса ÿсеççĕ.

Интернат шкулта 11 класс тата вĕренÿ хыççăнхи вăхăта усăллă irттерме 10 ушкăн ĕçлет. Ятарлă кружоксенче ачасем ташлама, вĕтĕ шăрçапа тĕрлеме, ÿкерме тата ытти ăсталăха вĕренеççĕ. Ÿкерÿ кружокĕ уйрăмах килĕшет вĕсене. Ольга Яковлевна Шедикова вĕрентекен çав тери илемлĕ ÿкерме хăнăхтарать. Çавăнпах ĕнтĕ ачасен ĕçĕсем республика, Раççей, пĕтĕм тĕнче шайĕнчи куравсене хутшăнаççĕ, конкурссенче çĕнтереççĕ.

Шкулăн тĕп специализацийĕ – ĕçе хăнăхтарасси. Çавăнпа кунта ĕç вĕренĕвĕпе /слесарь, столяр, штукатур-маляр, çĕвĕç тата ял хуçалăх ĕçĕсем/ экзамен тытаççĕ. Саккăрмĕш тата тăххăрмĕш классенче ачасем пуласлăхра хăш ĕçе суйласа илессине палăртаççĕ. Кăмăл пулсан тÿрех икĕ специальноçе те вĕренме пулать.

– Кашни ачапа ĕçлеме план пур пирĕн, – калаçăва хутшăнать директор заместителĕ Светлана Геннадьевна Крючкова. – Социаллă педагог йывăр кăмăллисемпе уйрăммăн ĕçлет, психологпа воспитательсен тÿпи те пысăк. Эпир пĕрле пуçтарăнса кашни ача валли уйрăм программа хатĕрлетпĕр, унсăрăн май çук. Пирĕн ачасем шахматла лайăх выляççĕ. Шашкăлла выляссипе те яланах малта. Пĕтĕм Раççейри Шахмат ассоциацийĕ шкула шахмат хатĕрĕ нумай парнелерĕ. Кружока икĕ çул ĕнтĕ Владимир Михайлович Николаев математик ертсе пырать. Ачасем ун патне хаваспах пуçтарăнаççĕ. Шахмат вĕсемшĕн йывăр пулать тесе шухăшлаттăмăр. Çук иккен, хăвăртах алла илчĕç.

Кунта вĕренме килнĕ чухне хăш-пĕр ача калаçма кăна мар, сасса йĕркеллĕ калама та пултараймасть. Вĕсемпе логопед ĕçлет. Кĕçĕн классен вĕрентекенĕсем те нумай тăрăшаççĕ. Çапла ачасем пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çырма та хăнăхаççĕ.

Хăшĕ-пĕри сăвă çырассипе те кăсăкланать. Ирина Васильева вĕренсе тухса кайнă ĕнтĕ, çапах унăн сăввисем халĕ те кунта ĕçлекенсене хавхалантараççĕ. Музыка вĕрентекенĕ ертсе пынипе мĕнлерех хитре юрланă тата вăл! Тăрăшуллăскер пĕлтĕр пĕтĕм Раççейри «Лучший по профессии» конкурсра çĕнтернĕ. Халĕ Ирина Етĕрнери агротехникумра вĕренет. Унăн çитĕнĕвĕ интернат шкул ĕçченĕсене, паллах, питĕ савăнтарать.

– Пирĕн çемьесен 50 проценчĕ проблемăллă, – пăшăрханса пĕлтерет Надежда Дмитриевна. – Тĕпрен илсен вĕсем – ялтисем. Пепкисен хавшаклăхĕн тĕп сăлтавĕ шутне чылай чухне ашшĕ-амăшĕ эрехпе иртĕхнине кĕртмелле пулĕ. Çакă, паллах, тĕпренчĕкне усал витĕм кÿрет.

Паянхи саккун ачана кирек хăш шкулта та вĕрентме ирĕк панине аса илтерет педагог. Унăн шухăшĕпе, вĕренÿ организацийĕн кашни ача валли программа хатĕрлемелле, тьютер – ятарлă педагог – кирлĕ.

– Çирĕм пилĕк ачаран пĕри хавшакрах пулсан вĕрентекенĕн ун валли питех вăхăт çитмест-çке, вăл ăна 5-7 минут кăна уйăрса пама пултарать, – тет вăл. – Пур ачана та тимлĕх кирлĕ, мĕншĕн тесен вăтам шкул программипе пурте пĕрешкел ĕлкĕрейместĕ. Пĕтĕмĕшле аталануран юлса пыни вара ятарласа ĕçлемесен вăйланать кăна. Пирĕн интернат шкул шăпах çавăн пек ачасене пулăшу пама хатĕр. Кунта килекенсем, тĕпрен илсен, пурте пĕрешкел шайра. Паллах, пирĕн ачасен хушшинче те тĕрлĕрен вĕренекен пур. Программăна çăмăллатнă пулин те ăна кашниех тĕрлĕрен ăса хывать. Туятăр-и, вăтам шкулта вĕсене мĕн тери йывăр?

Чун пăшăрханăвĕсене ачасем психолога каласа параççĕ. Хăш чухне вĕсем килĕсенчен питĕ хурланчăк çитеççĕ. Эппин, унта темĕн пулса иртнĕ. Кун пек чухне вĕрентекен е воспитатель ачан чунĕнче мĕн пулса иртнине ăнкараймасан та пултарать, çавăнпа психологпа канашлани кирлех. Ача кашни çын умĕнчех чунне уçма пултараймасть-çке. Чи кирли, ăна амантасран та асăрханмалла. Пĕр-пĕр ыйту çуралсан вара ачасем час-часах вĕрентекенрен сĕнÿ-канаш ыйтаççĕ. Кама ытларах шанаççĕ, çавăн патне пыраççĕ.

– Тен, килĕсенче вĕсем юрату ăшшине питех туймаççĕ те пуль. Кунта килсен тÿрех ыталама чупаççĕ. Питĕ ырă чунлă ачасем. Мĕн пуррине тепринпе пайлама тăрăшаççĕ, – тет Светлана Геннадьевна. – Ашшĕ-амăшĕ те ачисене ăнланасса, малашнехи пурнăçне йĕркелеме пулăшасса шанас килет.


Дмитрий ГАВРИЛОВ ÿкерчĕкĕ.

Кашни çыннăн чунĕнче кĕрешÿ пырать, вăл хăйне ĕнерхине çĕнтерсе ыранхине хатĕрлет. Çакна тепĕр çын ăнланмасть кăна. Пирĕн пурин те камран та пулин мар, ĕнерхи хамăртан лайăхрах, вăйлăрах, çирĕпрех пулма тăрăшмалла.

Çавăнпа та тепĕр çыннăн айванлăхĕнчен куличчен шухăшлăр: унăн чунĕнче те сирĕнни пекех кĕрешÿ пырать-çке, апла эсир ăна ăнланма тивĕç.

***Лариса ПЕТРОВА.***

# Вĕри чĕреллĕ Софья



Кăнтăрла иртнĕ. Урампа иккĕмĕш класра вĕренекен Софья Кулькова хыпаланса утать. Ара, хăвăртрах килне çитес килет унăн! Сăлтавĕ те пур. «Тетте» журналта хăй çырнă сăвăлла тупмалли юмахĕ пичетленнĕ-çке. Çак хыпара хăвăртрах килтисене те пĕлтересшĕн пĕчĕкскер.

– Мăн турат çине ларса
Мăйăр хуппине катать.
Хĕлле валли шур кăмпа
Ытлă-çитлĕ пуçтарать! – сăвăларĕ хайхискер сасăпах.

Сăвă – тӳпе пек таса, çулăм пек хĕрӳ, пин-пин чечек пек асамлă пĕчĕк хĕрачашăн. Ăна çырнă вăхăтра вăл ĕмĕтре таçта-таçта çитсе курать. Хăйне ытла та селĕм туять. Кăмăлĕ çĕкленет, ĕмĕчĕ çунатланать, чунĕ савăнать. Çырас туртăмĕ тата вăйланать.

– Сăвă çӳлелле утьăкка ывăтнăн туйăнать, унтан хура тăпраллă çĕр çине каялла антарать. Ах, саваннипе чĕрем кăкăртан тухса тараслах кăрт-кăрт сикет, – тесе тата хăвăртлатрĕ утăмне.

Чăнах, паянхи кун тĕлĕкри пек иртрĕ уншăн. Юратнă вĕрентекенĕ Наталия Александровна Миронова класĕнчи темиçе ачан сăвви журналта пичетленнине хыпарларĕ. Тĕрĕссипе, хăйĕн хушаматне çеç илтрĕ çав ун чухне. Пăлханнипе, пăшăрханнипе ыттисен ячĕсене илтсе юлаймарĕ. Уроксем вĕçленсен шкулта пĕр самант та тытăнса тăрас килмерĕ унăн. Ара, хăйĕн вышкайсăр пысăк савăнăçне пурне те калас килчĕ-çке унăн!

Тĕлĕнмелле пулин те, килтисем те чунтанах хĕпĕртерĕç. Журнала пĕри те тепри тытрĕ, унти йĕркесемпе кăмăлтан паллашрĕ.

– Чим-ха, эсĕ Митта Васлейĕ пекех поэт пулмастăн-и-ха? Унăн çулĕпе кайса пире те тĕлĕнтерместĕн-ши? – терĕç вĕсем.

Çапла, çапла, Софья Васлей Митта йăхĕнчен... Кукашшĕн амăшĕ, Зинаида Петровна Митта, Москакасси шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине чылай çул вĕрентнĕ. Миттан тепĕр çывăх тăванĕ, Галина Аверьяновна Тимофеева, Софьян юратнăран та юратнă кукамăшĕ. Вăл вара библиотекăра вăй хунă. Ачаранах пукане театрĕпе кăсăкланнăскер, хăй те çав ĕçе чунтан парăнса ĕçленĕ.

Софья та кукамăшĕн ĕçĕпе хавхаланса ӳсрĕ. Ăна кура вăл чăвашла спектакльте сăнар калăпларĕ. Апрель уйăхĕнче каллех сцена çине тухĕ. Пĕрле вĕренекенсемпе куракана хавхалантарĕ.

...Акă Софьян урок тумалли сĕтелĕ. Вăл каллех сăвă çырма тытăннă. Çырнă, çырнă, хуратнă. Татах çырнă... Тен, чăнах Москакасси шкулĕн вĕренекенĕ те Митта Васлейĕ пек вĕри чĕреллĕ поэт пулĕ?

# Йĕлтĕрпе ярăнса юлам-ха

Çуркуннехи çанталăк юлашки вăхăтра пĕр евĕрлĕ тăчĕ. Ирхинепе каçпа чылай сулхăн. Темшĕн вăхăт çитмесĕрех сивĕтрĕ тата. Кăнтăрла вара пĕрмаях çап-çутă хĕвел, янкăр кăвак тӳпе. Урамсемпе сад-пахчасем витĕр чăрсăр çил аташса çӳрет. Тахçанхи йывăçсен хунавĕсем ирĕксĕр авкаланаççĕ, хумханаççĕ, такамран пулăшу ыйтнăн, пĕр шелсĕр пуçĕсене çĕре çити таяççĕ.

– Шел, таврари юр пĕчĕккĕн ирĕлме тытăнчĕ. Вăл çĕр питĕнчен йăлтах çухаличчен тата ытларах йĕлтĕрпе ярăнса юласчĕ, – терĕ иккĕмĕш класра вĕренекен Руслан Матвеев хăй ĕмĕчĕпе ыттисене паллаштарса.

Ку сăмахсене ахальтен каламасть арçын ача. Йĕлтĕр сырса уй-хир тăрăх çисĕмле хăвăртлăхпа çӳреме кăмăллаканскер хĕл кунĕсене юратать-çке! Шкулта та авă, физкультура урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтет. Чи-чи хытă чупаканни вăл, никама та хăйĕнчен ирттерсе ямасть.



– Тĕрлĕ ăмăртура вăл тĕк пек вăшт! вĕçсе иртет те тӳсеймесĕр кăшкăрса та яратпăр: «Руслан! Руслан, хăвăртрах!» – тесе хавхалантаратпăр. Ах, унăн пултарулăхĕпе савăнатпăр, мăнаçланатпăр, – теççĕ пĕрле вĕренекенсем хăпартланса калаçнă май.

...Йывăçсемпе хупланнă ял. Нимпе те уйрălса тămасть вăл юнашар ялсенчен. Хĕвеллĕ кун иртет, каç пулать. Унтан каллех çĕр тĕттĕмĕ ерипен сирĕлет. Тул çутăлса çитет. Ял çинче сас-чӳ сарăлать. Таçта анчăк вĕрет, выльăх-чĕрлĕх макăрать. Ĕçчен халăх ăшă ыйхăран вăранать.

Ачисем те кунта ытти ялсенчи пекех. Акă униче çумĕнчи кил хапхи шăлтăрт! уçăлчĕ. Урама çĕлĕк тăхăннă арçын ача йĕлтĕр йăтса тухрĕ. Руслан Матвеев ку, куллен йĕлтĕрпе ярăнма кăмăллаканскер.

Хапха умĕнче вăл йĕлтĕр çине тăчĕ. Татах тем кăштăртатать-ха. Акă йăш-яш шукаласа çул çине тухрĕ. Ир. Юр çийĕн урам тăрăх аналла вăшлатарчĕ ача. Çил пек вĕçтерсе пырать. Урамăн икĕ енчи çуртсем, пуйăс вакунĕсем евĕр, вĕлт те вĕлт иртсе юлаççĕ. Акă паллакан мучи:

– Çырлахтăр ачам, эсĕ мĕн-ма шкула каймастăн паян?

– Канмалли кун-çке. Çавăнпа паян кунĕпех ярăнатăп. Çитменнине кĕçех юр та ирĕлсе пĕтет. Унччен киленсе юлас тетĕп. Çуркуннепе çулла йĕлтĕр çине тăраймăп, хир-хир тăрăх çӳресе кăмăла хăпартаймăп, – терĕ хаваслă арçын ача.

Унтан йăл! кулчĕ те малалла каллех çил пек ыткăнчĕ Оринин шкулĕн вĕренекенĕ...

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Муркаш районĕ.

# Пĕри программист пулатăп тет...




Урамра çуркунне. Хĕвел шартарса пăхать. Хĕл сулхăнĕнче шуранкаланнă пит-куçа пăхăрлантарать. Юр ирĕлсе сĕлкĕшленнĕ. Сăрхăнакан шыв, лупашкасене тулса, пĕвене çитме васканă май, çĕр питне чĕркелесе усăнă çулĕпе шăнкăр-шăнкăр юрласа хĕрача çивĕчĕ пек явăнса юхать.

Кунашкал çанталăка чунтан юратаççĕ Оринин шкулĕн тăваттăмĕш класĕнчи вĕренӳ отличникĕсем: Денис Дмитриевпа Аня Алексеева. Кантăкран урамалла пăхса тăраканскерсене урока лармаллине систерекен шăнкăрав шартах сиктерчĕ. Вĕсем ытти ачасемпе парта хушшине вырнаçрĕç.

Пӳлĕме класс ертӳçи Елена Валерьевна Романова кĕчĕ. Чăваш чĕлхи урокĕнче «Ӳссен эсĕ кам пулатăн?» ятлă сочинени çырассине пĕлтерчĕ.

Дениспа Аня шухăша путрĕç... Тăваттăмĕш класа çитнĕ-ха вĕсем, анчах шкултан вĕренсе тухсан ăçталла çул тытассине палăртман темелле. Арçын ачапа хĕрачана пĕрле вĕренекенсем хисеплеççĕ, юратаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те пур предметпа та «5» паллăпа ĕлкĕрсе пыраççĕ. Спортра та хастар. Тĕрлĕ олимпиада-конкурсра яланах малти вырăнсене тухаççĕ.

Аллисене ручка тытса ĕçе пуçăнчĕç çамрăксем... Аня следователь, Денис программист профессийĕсене суйлас ĕмĕтлине палăртрĕç вĕсем. Шăнкăрав янăрарĕ.

– Ĕç мĕнле пырать, Денис?
– Чиперех. Санăн?
– Çырса пĕтертĕм, – йăл кулчĕ арçын ача.

Тĕлĕнмелле пулин те, вĕрентекен вĕсен ĕçĕсене чи лайăххисен шутне кĕртрĕ.

– Маттурсем, малашне те çапла хастар пулăр. Ачасем, куратăр-и, хаçат-журнал, кĕнеке вулакан чĕлхи яка та çыпăçуллă. Сочинени çырнă чухне витĕрех курăнать. Илемлĕ сăмахсемпе усă курма пĕлнисĕр пуçне вĕсем сăвă йĕркисем те шутласа кăларма пултараççĕ. Дениспа Аня ĕçĕсене вуласа тухма питĕ кăмăллă пулчĕ. Тен, кам пĕлет, каярах «Тантăш» хаçатпа та туслă çыхăну тытĕç. Вĕсен ĕçĕсем юратнă кăларăмра пичетленни хăйсене кăна мар, хама та хавхалантарĕ тата! – терĕ Елена Валерьевна вĕренекенсен сочиненийĕсемпе ыттисене паллаштарнă май.

➲➲➲ Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.

# Юрă чиртен сывалма пулăшрĕ



Маша амăшĕпе

Хайне тĕрлĕ çĕрте тĕрĕслет вăл, чылай кружока çÿресе Турă панине аталантарать. Пĕтĕмпех аван та ăнăçлă пулса пынинчен хăй те тĕлĕнет.

– Тăватă çулта чухне юрă-кĕвĕ тĕнчипе паллашрăм, юрласси ытларах та ытларах кăмăла кайнине кунсеренех туятăп. Пĕчĕк чухне астмăпа чирлеттĕм. Ăна çĕнтерес тесех юрлама хăнăхма сĕннĕ тухтăрсем. Вĕсемех сывлав органĕсене аталантармашкăн, çирĕплетмешкĕн вокалпа туслашмалли каланă аннене. Çапла май эпĕ ача-пăча пултарулăхĕн çуртĕнчи «Нюанс» студири хора çÿреме тытăнтăм. Каярах, юрлама пултарнине ăнланса илсен, Роман Блок ертсе пыракан «Ылтăн пусма» студие çырăнтăм. Кастинг витĕр тухнă хыççăн эпĕ пĕччен юрлама пуçларăм. «Ылтăн пусмара» иккĕмĕш çул ăсталăха туптатăп, – паллаштарчĕ хăйĕнпе хĕр пĕрчи.

**– Юрă ăсталăхĕсĕр пуçне унта тата мĕне вĕренетĕн?**

– Тĕрĕс сывлама вĕрентĕм. Тĕрлĕ сасă кăларма та çитрĕм. Çакна регистр теççĕ. Унпа усă курма пĕлни юрлакана питĕ кирлĕ.

**– Юрлани чиртен хăтăлма пулăшрĕ-и?**

– Çапла. Питĕ хĕпĕртетĕп куншăн. Тепĕр пĕлтерĕшлĕ самант вара – юрă-кĕвĕ тĕнчи чуна тыткăнлани.

**– Эсĕ çак енĕпе тĕрлĕ конкурса хутшăнса палăратăн. Республикăра кăна мар, унăн тулашĕнче те. Çулсеренех иртекен «Чăваш Ен ĕнчисем» ача-пăча пултарулăх фестивалĕнче пĕлтĕр 1-мĕш вырăна тухрăн. Кăçал та унта хутшăнас кăмăл пур-и?**

– Паллах. Кăçал «Ылтăн пусма» студири Настя Кириллова тусăмпах дуэтпа юрлăпăр. Икĕ тапхăртан тухса гала-концерта лекме тăрăшăпăр. Пĕлтĕрхи çĕнтерÿ хавхалантарни халĕ те чунра-ха. Уйрăмах Юрий Энтин композиторăн: «Маттур! Лайăх юрлатăн», – сăмахĕсем татах та тăрăшма çунат хушаççĕ.

**– Нумай пулмасть ачасен хушшинче иртекен Пĕтĕм Раççейри «Умка – 2017» конкурс фестивальте те эсĕ тÿресене пултарулăхупа тĕлĕнтернĕ. Ку тупăшăва хăвах хутшăнас терĕн-и?**

– Унта кайса пăхма «Чăваш Ен ĕнчисем» фестиваль продюсерĕ Сергей Бреус сĕнчĕ.

**– Мускавран 2-мĕш степеньлĕ Дипломпа таврăнтăн, маттур! Çĕнтерÿçĕсен йышне кĕме çăмăл марччĕ ахăртнех.**

– Хампа пĕр çулти ачасен хушшинче тупăшма йывăрах пулмарĕ.

**– Çак пĕлтерĕшлĕ пулăмпа çыхăннă самантсенчен уйрăмах асра юлни пур-и?**

– Тĕрлĕ мероприяти иртрĕ. Ăсталăх класĕсем питĕ килĕшрĕç. «Голос. Дети» проект çĕнтерÿçисем юррисемпе тыткăнларĕç. Алă ĕç ăсталăхне вĕрентекенсемпе пĕрле хам та çăмран йăваласа кушак тетте хатĕрлерĕм. Халĕ вăл çав телейлĕ саманта аса илтерсе чуна ăшăтать. Унсăр пуçне «Умкăра» паллашнă чылай çамрăк талантпа соцсетьре çыхăну тытатăп. Çĕршывăн тĕрлĕ хулинчен вĕсем.

**– Соцсеть тенĕрен... Санăн страницунта хăв хатĕрленĕ видеороликсем те пур. Видеомонтаж тума мĕнле вĕрентĕн?**

– Ку мана тахçанах кăсăклантаратчĕха. Пĕлтĕр «Куча мала» ача-пăча медиа центрне çÿреме пуçланă хыççăн шухăша пурнăçа кĕртрĕм. Унта питĕ интереслĕ! Видеомонтаж тума, кино ÿкерме, илемлĕ сăнÿкерчĕксем хатĕрлеме, интервью илме, материал çырма тата ытти усăллă япалана та вĕрентеççĕ. Çакă пĕтĕмпех малашне кирлĕ пулĕ тесе шухăшлатăп.

**– Видеомонтаж кашниех тума пултарать-и?**

– Ун валли компьютер, ятарлă программа, сăнÿкерчĕксем е видеоролик кирлĕ. Мультик хатĕрлес тесен ÿкерчĕксене йĕркипе вырнаçтармалла та вĕсене хускалмалла тумалла. Тĕрлĕ спецэффект хушма юрать – ку видеоролике хăйеврĕлетет. Малтанлăха çакна пĕлни çителĕклĕ-тĕр, хăнăхса пынăçемĕн картинăсем пахарах пулĕç.

**– Çак ĕç саншăн мĕншĕн интереслĕ-ха?**

– Монтажпа аппаланни лăплантарать. Тата тĕрлĕ мультик хатĕрлесси, çĕннине шухăшласа кăларасси илĕртет.

**– Кăсăклăх ахальтен çуралман ĕнтĕ. Санăн çитĕнсен паллă режиссер е видеомонтажер пулас килет пуль-ха?**

– Çук, кун пирки шухăшламан. Тележурналист профессийĕ пуринчен ытларах килĕшет мана. «Куча мала» центра çÿреме пуçласанах çакна ăнланса илтĕм. Унсăр пуçне, анне те, Ирина Владимировна, вунă çул радиожурналистра тăрăшнă-çке.

**– Юрлама та, медиа центра кайса килме те, конкурссене хутшăнма та, çав вăхăтрах вĕренме те вăхăту мĕнле çитет?**

– Хăш чухне, чăнах та, пăтăрмахсем сиксе тухаççĕ. Тĕпрен илсен пĕтĕмпех ĕлкĕретĕп, çапла пурăнма хăнăхрăм. «Куча мала» центра уроксем хыççăн эрнере виçĕ хут çÿретĕп, видеомонтажпа канмалли кунсенче аппаланатăп… Тăрăшсан пĕтĕмпех йĕркелеме пулать.

**– Йывăрлăхсене мĕнле парăнтаратăн?**

– Чăтăмлăх, тăрăшулăх, ĕçченлĕх тата çывăх çынсем хавхалантарни – акă мĕн пулăшать кăткăс лару-тăрурăн тухма. Чи кирли – кирек епле пулсан та пуçа усмалла мар, лайăххине çеç ĕненмелле.

**– Пĕр ĕçпе çеç кăсăкланмастăнçке эсĕ, чылайăшне алла илме ăнтăлатăн. Çакă сана мĕн тума кирлĕ-ха?**

– Манăн тĕллев – аталану. Мĕн пĕлнипе çеç лăпланса ларас шухăш çук-ха хальлĕхе, малашне тата интереслĕ кружоксене çÿреме пуçлăп. Пултаруллă çын пур çĕрте те пултаруллă, – тесе ахальтен каламан-çке. Ваттисем калашле, «Аналалла шырасан шывăн вĕçне тупаймăн». Çавăнпа та яланах шыравра пулмалла.

**– Пушă вăхăту та çук-тăр санăн?**

– Кăштах пур.

**– Ăна мĕнле ирттеретĕн?**

– Чун киленĕçĕ – килте супăнь пĕçерсе хатĕрлесси. Ултă çулта мана супăнь ăсталамалли хатĕр-хĕтĕр парнеленĕччĕ. Эпĕ унпа пĕр хут усă куртăм та урăх аппаланмарăм. Нумай пулмасть пăрахнă ĕçе çĕнĕрен пуçăнтăм. Çĕнĕ хатĕрсем туянтăмăр. Тĕрлĕ формăллă, шăршăллă, тĕслĕ супăнь хатĕрлетĕп. Юлташсене уявра хам ăсталанăскерсене парнелесе савăнтаратăп, хăш чухне супăнь сутса кăштах укçа-тенкĕ те тăватăп.

**– Епле маттур эсĕ! Мĕн хавхалантарать сана?**

– Юратнă çывăх çынсен, аттепе анне тата шăллăмăн, ăшă сăмахĕсем.

**– Кирек мĕнле ĕçе пуçăнсан та санăн йăлтах ăнăçлă пулать. Чуна çывăххине мĕнле суйласа илмелле-ха? Пирĕн вулакансене ку тĕлĕшпе мĕнле сĕнÿ парăн?**

– Хамăра тĕрлĕ çĕрте тĕрĕслесе пăхмалла. Сăмахран, эпĕ пĕчĕк чухне анне манăн пултарулăх пирки пĕлмен-çке, çавăнпа чылай çĕре çитсе курнă: ташă, алă ĕçĕн кружокĕ… Тĕлĕнмелле те, анчах пĕтĕмпех аван тума пултарнă эпĕ.

Çавна май «Тантăш» тусĕсене те чун туртнă ĕçпе çеç кăсăкланма, тĕрлĕ енлĕн аталанма сунатăп.

*Нина ЦАРЫГИНА.*



Маша шăллĕпе Давидпа

Тантăш
9 №, 2017, пуш, 9



Ултă курăнуллă пьеса

# Нушаллă ачалăх ахрăмĕ

**Выляканссем:**
Уртем – 14 çулта.
Элюк – 5 çулта.
Зоя инке.
Макçăм – Зоя упăшки, Уртемпе Элюкăн куккăшĕ.
Наталипе Микулай йĕкĕрешсем – Зойăпа Макçăм ачисем.

**1-мĕш курăну.**

*Касу. Пĕчĕк Элюкпа унăн пиччĕшĕ Уртем симĕс курăк çине ларнă та кайăк юррине киленсе итлеççĕ. Кĕçех Элюк чечексем пуçтарма тытăнать. Пиччĕшĕ ун çине хурлăхлăн пăхса ларать.*

**Уртем.** Эх, Элюк! Эс хальлĕхе пурнăçа нимĕн те ăнланмастăн-çке… Ытла та пĕчĕк вĕт-ха эсĕ.

**Элюк.** Ма ăнйанаймастăп вайа? Мĕн кайасшăн эс кунпа? /Тĕлĕнсе ыйтрĕ пĕчĕкскер/.

**Уртем.** Чи илемлĕ вăхăт – ачалăх, анчах та пирĕн ачалăх чаплă иртмест çав. Йывăррăн шăвать вăл. Аттепе анне пурăннă пулсан-и? Атте, ав, пирĕнтен ытларах эрехе юратрĕ, çавна пулах çут тĕнчерен уйрăлчĕ, юратнă аннем сана çуратсан çак çĕр çинче пурăнаймарĕ. Питĕ шел.

**Элюк.** Пичче, ан макăй… Эп санпа юнашай. Эпий иккĕн, ан пăшăйхан.

**Уртем.** Юрĕ, ку калаçуран пăрăнар-ха, иртнине аса илсен, чăн та, чун хурланать. Касăва кĕçех яла хăваласа кĕртĕпĕр. Тепĕр сехет кăна юлчĕ.

**Элюк.** Пиччем, эс аннене ас тăватăн-и?

**Уртем.** Паллах… */Куççулĕ шăпăрах пит çăмартийĕ тăрăх юхса анчĕ/.*

**Элюк.** Ан макăй, лăплан… */Куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ чĕтресе/.*

**Уртем.** Пирĕн анне питĕ лайăхскерччĕ. Мана вăл нихăçан та вăрçса курман. Эпĕ шкултан таврăннă çĕре сĕтел çинче вĕри апат пăсланатчĕ. Уйрăмах мана чăмăрла çĕр улмине турăхпа сыпса çиме килĕшетчĕ. Чиперех пурăнаттăмăр, шел, атте ĕçке ерчĕ. Пĕррехинче вара пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Тепĕр икĕ эрнерен эсĕ çуралтăн. Савăннипе больницăна чуптартăм. Унта хăрушă хыпар пĕлтерчĕç. Ман юратнă аннем ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă… Сана, пĕчĕкскере, ун чухне курса юлаймарăм. Чунăм тӳсмелле мар ыратнăран сак çине лаках лартăм. Урăх… Урăх нимĕн те ас тумастăп… Юрĕ, атя, хăвала сурăхсене. Вăхăт çитрĕ киле кайма.

**2-мĕш курăну.**

*Ачасем касу кĕртнĕ хыççăн вĕсене хирĕç Зоя инкĕшĕ тухать. Питне-куçне пĕркелентерсе Уртем патне чупса пырать.*

**Зоя инке.** Сурăхсене мĕншĕн час кĕртсе ятăр? Тепĕр пилĕк минут чăтаймарăр-им? Кур-ха вĕсене, пăхса-сыхласа тăмалла вĕт. Çапла çав, ĕç самантрах чикет вăл! */Кăшкăрашрĕ хĕрарăм/.*

**Уртем.** Инке, пилĕк минутшăнах ан мăкăртат ĕнтĕ, вĕсем çитменнине ялта та каçченех çиеççĕ.

**Зоя инке.** Çитет пакăлтатса! Ытла нумай калаçатăн. Атя, хăвăртрах ĕне сума кĕр. Эс, пĕчĕкки, кашăк-чашăк çу! Нумай ан калаттарăр мана. Атту тарăхса кайма пултаратăп!

*/Уртем Элюка пӳрте çавăтса кĕртет те савăт-сапа çума шыв ăшăтса парать. Хăй вара витре илсе ăне сума тухать. Хĕрача кашăк-чашăк çунă чух ăнсăртран пĕр куркине урайне ӳкерсе çĕмĕрет. Хăраса ӳкнĕ шăпăрлан ванчăксене хыпаланса пуçтарнă вăхăтра пӳлĕме Зоя инкĕшĕ кĕрсе тăрать/.*

**Зоя инке.** Ых, ачу-пăчу! Мĕн, тăнă чухнех лаша пек çывăратăн-им? Чи хаклă савăта ватса çĕмĕртĕн вĕт! */Хĕрачана питĕнчен çутăлтарса ярать/.*

*Элюк питне аллипе хупласа макăрса ярать. /Пӳрте тулли сĕт витри йăтнă Уртем кĕрет. Йăмăкĕ макăрнине курсан вăл ăна ыталаса илет/.*

**Уртем.** Зоя инке, эсир ман йăмăка мĕн турăр?

**Зоя инке.** Нимех те. Пĕрре çупса ятăм. Ăс кĕтĕр тесе. Ара, чи хаклă курксана ӳкерсе çĕмĕрчĕ вĕт, мур илесшĕ!

**Уртем.** Ун çине алă çĕклеме ирĕк çук сирĕн, Зоя инке! Манса ан кайăр ман сăмахсене. Вăл пĕчĕк, ун вырăнне мана çапăр!

**3-мĕш курăну.**

*Микулайпа Натали пӳлĕмрен йăраланса тухаççĕ. Зоя инке ачисене курсан çу пекех ирĕлсе каять. Ыталаса илсе чăпăрт! чуп тăвать вĕсене.*

**Зоя инке.** Ну, чĕппĕмсем, хырăмăрсем те выçрĕç пулĕ? Атьăр, вырнаçăр сĕтел хушшине. Сире валли паян та тутлă апат пĕçертĕм.

*/Уртем чашăк-кашăк çуса пĕтерет. Аллине ал шăллипе типĕтнĕ хушăра апатланакансем çине ăмсанса пăхса илет, анчах икĕ пĕртăвана никам та сĕтел хушшине йыхравламасть/.*

**Уртем.** Элюк, атя, урамри сурăхсене картише хăваласа кĕртер. Каç пулсах кайсан шыраса тупаймăпăр тата.

**Элюк.** Атя апйа. */Чунĕ кӳтсе килнипе каллех макăрса ярать/.*

**4-мĕш курăну.**

*Уртемпе Элюк пӳрте кĕрсе выльăх валли пĕçернĕ хупăллă пилĕк çĕрулмие илеççĕ те каялла тухса каяççĕ. Çакна асăрханă Зоя инкĕшĕ çав тери тарăхса каять.*

**Зоя инке.** Çав çĕрулмисене сыснана панă пулсан усăллăрах та пулатчĕ. Кусене, харам пырсене, çитерсе усрани мĕн усси?

*Çав вăхăтра арăмĕ патне Макçăм пырса тăрать.*

**Макçăм.** Эс ытлашши ан калаç! Уртемпе Элюк – ман ачасем вырăнĕнчех. Вĕсем пирки тепре япăх каланине илтсен-и?

**Зоя инке.** Вĕсене юратнине питĕ лайăх пĕлетĕп-ха! Хăвăн тĕпренчĕкӳсене çапла юратасчĕ!

**Макçăм.** Эп вĕсене пурне те пĕр пек юрататăп, сан пек уйăрса тăмастăп. Эсĕ ăна Уретмпе Элюка ним вырăнне хумастăн! Тăлăх-турата хĕрхенсе пулăшас вырăнне ура хурса пыратăн. Кашни утăмрах!

*/Тин çеç çывăрса тăнă Микулайпа Натали тĕпеле çитсе кĕреççĕ. Газ плити çинчи кастрюльсене уçкаласа пăхма тытăнаççĕ/.*

**Зоя инке.** Ачамсем, хырăм выçрĕ-им сирĕн? Апла, кĕтĕр, çăмарта ăшаласа паратăп. Унччен сĕтпе пĕремĕк çикелĕр-ха.

**Макçăм.** Ачасене лайăх воспитани паратăн вара эсĕ. Кушак аçисем пек, апат çиеççĕ те çывăраççĕ. Кунĕн-çĕрĕн çапла. Ӳссен кам пулĕç вĕсем? Мĕнле професси суйласа илсе ăçта вăй хурĕç-ши? Кайран вĕсенчен пулăшу кĕтмелли çук пирĕн!

**Зоя инке.** Чарăн! Хăв тĕпренчĕкӳсем пирки епле çапла калама хăятăн?! Çын мар пулĕ эсĕ!

**Макçăм.** Ачасем, ачасем… Йăлăхтартăн! Уртемпе Элюка мĕншĕн выçă усратăн? Вĕсем валли мĕншĕн апат хăвармастăн, мĕншĕн ыттисемпе пĕрле сĕтел хушшине чĕнместĕн?

**Зоя инке.** Мĕнле çитерместĕп вара? Кам каларĕ ку суя сăмаха? Ирхине, кăнтăрла, каçхине пĕрер курка сĕте наччасра çавăрса хураççĕ вĕт! Тата мĕн кирлĕ вĕсене?! Ых, çын ачисемшĕн сăмах илтмелле ман кунта тата!

**Макçăм.** Пĕр курка сĕ-ĕ-ĕт?! Кай, ан тĕлĕнтер-ха эс мана! Сан ачусем пĕр чашăк яшка çинĕ хыççăн тепре ыйтаççĕ!

**5-мĕш курăну.**

*Ирхине Уртем ĕне суса кĕтӳ хăвалать. Каллех пӳрте шăппăн кĕрсе ĕнерхи çĕрулмие илме тăрать, анчах пĕрре çеç юлнă. Ăна илсе тухать те йăмăкне парать.*

**Элюк.** Мĕншĕн мана кăна пайатăн? Атя, çуймалла тăвай. Эпий яланах çапла пуйăнма вĕйеннĕ вĕт. */Çав вăхăтра Зоя инкĕшĕ пырса тăрать/.*

**Зоя инке.** Мĕн пуш сăмах çапатăр? Çĕрулми çиме юрататăр-ха, анчах ăна пăхмасан хĕлле мĕнле пурăнас тетĕр? Атя, тухăр пахчана, унта, ав, çум курăк ашкăрса кайнă. Хушмасан ним те тумастăр, кахалсем!

*Пиччĕшĕпе йăмăкĕ пĕр сăмахсăрах пахчаналла тухаççĕ та хĕрӳ ĕçе пуçăнаççĕ.*

**Элюк.** Уйтем, мана аттепе анне патне илсе кайсам.

**Уртем.** Вăхăт çук вĕт-ха, вăхăт çук. Пĕрмай ĕç çине ĕç тупса парсах тăрать Зоя инке. Юрĕ-ха, мĕн те пулин тупатăпах акă. Лăплан, çитсе килĕпĕр аттепе анне патне.

*/Ĕçе вĕçлесен Уртем Зоя инкĕшĕ çывăракан пӳлĕме кĕрет. Лешĕ арçын ачана курсан тарăхса каять/.*

**Зоя инке.** Ых, çулламан пăру! Пахчара сысна çури пек хуп-хура пулнă хыççăн пӳрте кĕриччен аллу-уруна çума ăс çитмерĕ-им?

**Уртем.** Зоя инке, пирĕн çырла çиес килет.

**Зоя инке.** Ман килте нимле çырла та çук!

**Уртем.** Ăна пĕлетĕп-ха эпĕ, çавăнпа улăха çырла пуçтарма каясшăн. Эсир ирĕк паратăр-и?

**Зоя инке.** Ий, паллах, кайăр! Микулайпа Натали те тахçанах çырла тутине мантăмăр текелерĕç çав.



Артем БОРИСОВ
(Красноармейски районĕ, Красноармейскинчи 1-мĕш шкул)
ӳкерчĕкĕ.

*/Масар патне васкаса çитеççĕ икĕ пĕртăван. Ашшĕпе амăшĕн вил тăприйĕсем çинче ĕсĕклесех макăраççĕ. Унтан хăйсене алла илсе çырлана каяççĕ/.*

**6-мĕш курăну.**

*Асăннă ĕçсем хыççăн 15 çул иртнĕ. Уртемпе Элюк хулана тухса килнĕ. Анчах Уртем чирлесе вилнĕ. Ăна пытарнă хыççăн Элюк яла Зоя инкĕшĕ патне таврăнать.*

**Элюк.** Пирĕн укçана тавăрса пар, Зоя инке!

**Зоя инке.** Мĕн пирки пуплетĕн эсĕ?

**Элюк.** Пире усрава илнĕшĕн панă укçа пирки сăмахăм. Укçине илнĕ-ха эсĕ, анчах пире нушалантарса усрарăн.

**Зоя инке.** Ара, эп сире пăхман пулсан çак çула çитееттĕнччĕ-и-ха, хĕрĕм? Сире мĕн тери лайăх пăхнă эп, хам çиес çăкăра сире панă.

**Элюк.** Пустуй палкама чарăн! Çĕтĕк япалапа çӳренĕшĕн Уртем шăнса пăсăлчĕ. Ас тăватăп, улттă тултарсан мана пиччем хăйĕн кофтине парнелерĕ. Манран парне пултăр терĕ. Кулăшла мар-и çак саншăн? Пĕчĕкле шăнса хĕне кайнăранах вилчĕ пиччем… Пĕртен-пĕр шанчăкăмччĕ вăл манăн…

**Зоя инке.** Ах, хамăн та чунăм ыратать. Микулайпа Натали хамăра ним вырăнне те хуми пулчĕç вĕт, хулана тухса кайрĕç. Кашни килмессерен укçа ыйтса тинкене илеççĕ тата. Эх… Каçар мана, Элюк… Каçар… Чавса çывăх та çыртма çук çав.

*/Элюк урăх пĕр сăмах та чĕнмест, ашшĕпе амăшĕн вил тăприйĕсем патне çул тытать. Палăртнă вырăна çитсен ĕсĕклесех макăрать/.*

**Элюк.** Пĕччен хăварас терĕр апла эсир мана çак çĕр çинче? Ача чухнехи пекех нушаланса пурăнтăр терĕр-ши?

*/Элюк чылайччен ĕсĕклесе ларать вил тăприсен умĕнче. Каç енне кăштах лăпланса, пĕтĕм вăйне пухса васкамасăр автобус чарăнăвĕ еннелле утатать/.*

**Настя МАКСИМОВА.**
Элĕк районĕ,
Юнтапа шкулĕ.

# Сканворд




# Сăмахкаçмăшсем



**Сылтăмалла:** 3. Вĕçет – çил мар, юрлать – çын мар /туп. юм./. 5. Ĕлĕкхи тĕштырă, ваттисем каланă тăрăх, унран пĕçернĕ пăтăран тутли çук, имĕш. 7. Кушак сĕтел урине чăрмаласан, çумăр пулать, хĕлле ... пулать /сăнав/. 8. Кушака çĕнсе шăши ... пулнă /ват. сăм./. 10. Сарă хырăн варри хăвăл /туп. юм./.

**Аялалла:** 1. Чăваш уйăх ячĕ. 2. Кушака – кулă, ...е – вилĕм /ват сăм./. 4. ... урлă сиксе каçаймăн /ват. сăм./. 6. Йывăçпа ĕçлемелли сăпрай. 9. Чăвашсен ырă йăла-йĕрки. 11. Чăваш хĕрарăмĕн «ĕç выранĕ».



1. К. Иванов тата Я. Ухсай çуралнă ял. 2. Паллă чăваш çăмăл атлечĕ. 3. Чăваш писателĕ тата ӳнерçи. 4. Чăваш поэтессиĕ. 5. М. Федоров /«Арçури» баллада авторĕ/ çуралнă ял. 6. Майракинчен тытмасăр ĕç пулмасть /туп. юм./. 7. Йăлара усă куракан пысăк савăт. 8. А. Артемьев çырнă повесть. 9. Е. Еллиев çырнă калав. 10. Çар званийĕ. 11. Ĕлĕкрех чей вĕретнĕ савăт. 12. С. Аслан çырнă калаври сăнар. 13. Чăвашсен паллă композиторĕ. 14. Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕнче ĕçленĕ ăсчах. 15. Бадминтон ваййин хатĕрĕ. 16. Паллă чăваш боксерĕ. 17. Паллă чăваш боксерĕ, Олимп ваййисен чемпионĕ. 18. Чăваш поэчĕ. 19. И. Яковлева алфавит тума пулăшнă вĕрентекенĕ. 20. Чăваш писателĕ. 21. К. Ивановăн «Нарспи» поэмине ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ чăваш ӳнерçи. 22. К.Ивановăн «Нарспи» поэмине якутла куçаракан̆ĕ. 23. Чăваш сăвăçи. 24. Чăвашран тухнă тĕнчипе паллă Китай тĕпчевçи. 25. А. Артемьев калавĕнчи чăваш салтак сăнарĕ. 26. Чăвашсен паллă скульпторĕ. 27. М. Шолоховăн «Усăнă çерем» романне чăвашла куçаракансенчен пĕри. 28. Пусма-тавар. 29. Чăваш тумтирĕсен гравюрисене 1812 çулта Парижра тухнă альбома кĕртнĕ вырăс ӳкерӳçи. 30. Чăвашсен паллă фольклорисчĕ.

## КУЛĂШ

Айăпа кĕнĕ вĕренекен патне педагог çитнĕ.
– Аннӳ килте-и?
– Çук-ха, ĕçрен таврăнайман.
– Асçу тата?
– Вăл та пытанчĕ.

* * *

– Атте, – тет ывăлĕ. – Ыран шкулта пĕчĕк пуху пулать.
– Пĕчĕк пуху тени мĕне пĕлтерет тата?
– Ĕнтĕ... Эпĕ, эсĕ тата класс ертӳçи çеç пулĕ унта.

# «Евĕрлев сăмахĕсемпе» тупмалли юмахсем»

## пуçватмăш

**Кашни тупмалли юмахра евĕрлев сăмахĕ пур. Тĕрĕс хуравсем тупсан, диагональ майлă /паллă тунă тăваткăлсенче/ тепĕр сăмах вуланĕ. Ăна тупма çăмăллатас тесе унăн пĕлтерĕшне те пĕлтерер: «Тӳп-тӳп, тӳпечĕк, тӳпе тăрри илечӳк».**

1. Тик-тик калтан, тик калтан, ылтăн пуçлă тие калтам. 2. Шăши кăна янкăлтăм кăлтарттин тпру. 3. Ик-чак чăмăртак, иккĕн тытса çимелле. 4. Мăш-мăшăрик шĕшкĕ айĕн кăп-кăп. 5. Шивĕкĕм, шĕнкĕрĕм, шыва ятăм путмарĕ, çĕре чикрĕм – çĕрмерĕ. 6. Вар-вар вархантi турат куç Турханти.

